**Килĕштерсе пурăннине мĕн çиттĕр**

# Ял уявĕ кашниншĕн савăнăç пулчĕ

Ярославка ял тăрăхĕнчи Чемей енре пилĕк ял пĕрпĕринчен инçех те мар вырнаçнă. Çавăнпах кунти çынсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнура-хутшăнура пулнинчен тĕлĕнме кирлех те мар. Ĕçлĕ туслăх тарăн тымар янă кунта. Юлашки вунă çулта вĕсем уйрăм пĕрлешӳллĕ хуçалăхра – "Чемеево" ял хуçалăх производство кооперативĕнче – малашлăх çулне такăрлатаççĕ. Пилĕк ял терĕм те кашнине асăнсассăн вырăнлăрах та пулĕ. Вĕсем: Елшик, Чемей, Варпуç Чемей, Тăмкасси, Çĕмĕртлĕх Чемей. Пĕлтĕртенпе иккĕмĕш хут вĕсенчен пĕринче – Елшикре – ял уявĕ ирттерчĕç. Маларахах систернĕрен кăçал вăл кашниншĕнех кĕтнĕ кун пулчĕ. Çавăнпа унăн савăнăçĕ те таврана анлă сарăлчĕ.



**И. Алексеев кăçал пĕрремĕш класа каймалли ялти пĕртен-пĕр ачана Алина Васильевана ырă çул сунса парне пачĕ.**

Елшик илемлĕ вырăнта вырнаçнă. Ял патне пыракан асфальт сарнă çул Елшик витĕр тухса кайса ăна çывăхри ытти ялсемпе çыхăнтарать, яла хăйне евĕр хăт кĕртет, ял çыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатать, тăван ен пуянлăхне ӳстерет. Ялти 96 кил-хуçалăхра паян 200 яхăн çын пурăнать. Кашниех ял малашлăхне пăхать, унăн аталанăвне хăйĕн тӳпине хывать...

Июнĕн 2-мĕшĕ. Ялти клуб çумĕнчи лаптăкра паян ял уявне ирттерме пalăртнăран ялта ирлесех савăнăç тăрать, пиçекен кукăльпе какай шӳрпин техĕмлĕ шăрши таврара хуçаланать. Ирхи ĕçсене пуçтарса тата уява хатĕрленсе кăнтăр иртнĕ тĕле клуб çумĕнчи симĕс çерем çине вырнаçтарнă саксем çине ял халăхĕ вырнаçса ларсан, вĕсем умне тухса Елшикри клуб заведующийĕ Раиса Иштонова уяв пуçланни çинчен пĕлтерчĕ, ял историйĕпе пурнăçĕ çинчен кĕскен каласа панипе пĕрлех ентешсене ял уявĕпе саламласа кунта килнĕ хăнасемпе паллаштарчĕ.

Малтанах пухăннисем умне Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Пайгусов тухса сăмах каларĕ, тĕслĕхсем илсе кăтартса ял тăрăхĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ, умри тĕллевсене уçса пачĕ, 2000 çултанпа паянччен Елшикри демографи мĕнле пулса пыни çинчен тата ку ĕçе лайăхлатасси пĕрлехи ĕç пулнине, патшалăх ача çуратакансене паракан пулăшу пирки пĕлтерчĕ.

– Елшик çыннин ĕçченлĕхĕ таврипех паллă.



**Кăçал вунпĕрмĕш класс пĕтерекенсем ялта виççĕн: Артур Порфирьев, Сергей Васильев тата Евгений Васильев. Вĕсем те ялтан сивĕнмессе шанаççĕ Елшиксем.**

Ĕçлейрет те вăл, савăнайрать те. Хĕллехи вăрăм каçсенче кăçатă йăваласа çывăхри пасарсенче сутнине кӳршĕ ялсем кăна мар, юнашар районсем те пĕлеççĕ. Çапла вара çак çăмăл мар ĕçе пахалăхлă пурнăçлакан Елшик ăстаçи самантлăха та ĕççĕр юлмасть, – терĕ Григорий Валентинович алă ăстисем паянхи уяв илемĕ пулнине палăртса.

Елшик çыннисен ĕçченлĕхне уйрăммăн палăртса ăстасемпе паллă çынсем çинче тĕплĕнрех чарăнса тăни те уявшăн вырăнлă пулмалла.

Малтанхи сăмахăм уявăн тĕп спонсорĕ Иван Алексеевич Алексеев пирки. Елшикра çуралса ӳснĕскер, шкул пĕтерсе инженер специальноçне алла илсен, Чувашгидроводхоз предприятире инженертан директора çити ӳссе çитрĕ, анчах хăйне пурнăç çулĕ çине кăларнă тăван ене самантлăха та манмарĕ. Вăл тăрăшнипе тата тимленипе 20 çула яхăн каялла Штранкă юхан шывне пĕвелерĕç, Елшикпа Турай хушшине бетон плитасем сарса çул турĕç, Чемей ялĕ урлă Елшике çитиччен асфальт çул сарчĕç. Ку тăрăхри плотинан шыв сийĕ халĕ 34 гектарпа танлашать. Вăл ял çыннисене пулă тытса канма питех те меллĕ вырăн. Çут çанталăк палăкĕ теме те пулать ăна паян. Çакнашкал илемлĕ вырăн пĕр çын тăрăшнипе пулманран паян Елшикре пурăнакан кашни çын пиркиех ыррине нумай калама пулать. Çапах та ял уявне пынисем пĕр саслă пулса тенĕ пекех çав кун пĕлтĕрпе кăçал ылтăн туй ирттернисене ăшă сăмахсемпе саламларĕç, вĕсен пурнăçĕ хăйсемшĕн тĕслĕх пулнине уçăмлăн пĕлтерчĕç. Ылтăн туй паллă тунисене уяв спонсорĕ И. Алексеев уйрăм парнесем парса чысларĕ. Ăна Зойăпа Геннадий Румянцевсем, Елизаветăпа Евстафий Романовсем, Клавдипе Николай Петровсем тивĕçрĕç. Спонсор парнисем ялти чи ватă Вера Николаевапа Мария Лазарева, анчахрах кил-çурт çавăрса çĕнĕ пӳрте пурăнма кĕнĕ Марийăпа Николай Ильинсем валли те пулчĕç. Кăçал вăтам шкултан вĕренсе тухакан виçĕ яш алла çыхмалли сехетлĕ пулни те аслă ăру çамрăксем çине тимлĕх уйăрнине кăтартрĕ.

Уявра "Чемеево" ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçи Н. Петров та пулчĕ, хуçалăхăн экономика тӳпинче Елшиксем мĕнле вырăн йышăнни пирки каларĕ. Н. Севастьянова врач, Р. Иштоновпа Н. Семенов ĕçченсем те ял пурнăçĕн аталанăвĕ пĕрлехи вăйран тăни пирки каларĕç, ытларах тăрăшакансене ятран асăнсах саламларĕç.

Çапла, пур-ха Елшикре ялйыш умĕнче хисеплĕ те паллă çынсем. Акă Елшикрен пурнăç çулĕ çине тухнă С. Борисов полковник çар академийĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн нумай вăхăт çар училищинче курсантсене çар ĕçне вĕрентнĕ, А. Максимов полковник службăна Атăлпа Урал тăрăхĕнчи çар округĕн финанс пайĕн ертӳçин çумĕ пулса вĕçленĕскер, халĕ тивĕçлĕ канура, В. Леонтьев подполковник хальхи вăхăтра Шупашкарти çар чаçĕн штаб пуçлăхĕнче вăй хурать, милици подполковникĕ Н. Тимофеев халĕ тивĕçлĕ канура. Пур-ха, пур кунта çуралса ӳснĕ тата халĕ çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче ăста вăй хуракан врачсем, инженерсем, учительсем. Чи маттуррисем, паллах, çĕр ĕçченĕсем. Вĕсен вăйĕпе-çке çĕршер гектар тырă-пулă ӳсет, пиншер пуç выльăх-чĕрлĕх ĕрчет.

Ял уявне Елшикри ял клубĕ çумĕнчи художество пултарулăх коллективĕпе Муркашри "Расна" фольклор ушкăнĕ савăк ташăюрăпа илем кӳчĕç, уява пынисене чылай вăхăт савăнтарчĕç.

Ял çыннисем кĕрекере те савăнчĕç. Пĕрлехи вăйпа пĕçернĕ какай шӳрпипе ăшă кукăль-икерчĕ уява пынă кашни çыншăнах паха пулчĕ.

Хĕвел анса каç сĕмĕ çĕр çине ӳкичченех клуб çумĕнчи çерем çинчен ял халăхĕ саланмарĕ: ташларĕ, юрларĕ, тулли кăмăлпа шӳтлерĕ.

Ял çыннисем спонсорсен пулăшăвĕпе уяв программине çитес çул татах та анлăлатма, ял илемĕпе тирпейлĕхĕшĕн тăрăшакансене парнесем парса хавхалантарма йышăнчĕç.

**Евгений ПĔТРОВ.**

**Раиса ИШТОНОВА сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Шкулсенче вĕренекенсем ĕçпе кану тата сывату лагерĕсенче**

# "Хамăршăн та, çынсемшĕн те усăллă ĕç тăватпăр",-

***теççĕ паян ĕç чĕрĕкне хутшăнакан хаваслă ачасем***

## Эмел курăкĕ пухаççĕ

Орининти вăтам шкулта 40 вĕренекене явăçтаракан "Факел" ĕçпе кану лагерĕпе пĕрлех паян "Лучики" сывлăха çирĕплетекен лагерь, районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă йĕркеленĕ юсавпа строительство бригади ĕçлеççĕ. Вĕсене татах 51 ача çӳрет. Çапла вара шкул дирекцийĕ ĕçе пĕлсе йĕркеленĕрен ачасен 5-мĕш чĕрĕкĕ питех те усăллă иртет.



Шкул çумĕнчи сывлăха çирĕплетекен лагере 2-5-мĕш классенче вĕренекен 30 ача çӳрет. Пирĕн ĕççене кунта лагерь ертӳçи Римма Лазаревна Мокшанова тата Ирина Германовна Скворцовапа Тамара Михайловна Скворцова воспитательсем ертсе-йĕркелесе пыраççĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа-тимлĕхпе кулленех ирхине линейкăна пуçтарăнатпăр, хыççăн пĕрле пулса сывлăха çирĕплетмелли хăнăхтарусем туса ирттеретпĕр. Кайран тĕрлĕ ăмăртусенче, конкурссемпе эстафетăсенче вăй виçетпĕр. Кашнинчех тăван тавралăх илемне, хамăр тăрăхри йывăç-курăкăн сиплев мелĕсене тата вĕсемпе хăçан, епле усă курассине алла илетпĕр. Каннă вăхăтсенче улăх-çаранта тĕрлĕ эмел курăкĕсене пухатпăр (**сăн ӳкерчĕксенче**): шапа хупаххи, чăрăш тăрри, вĕлтĕрен çулçи, хурăн çулçи т. ыт. те. Кунта чи пултаруллисем Наташа Михайлова, Иван Уткин, Настя Николаева, Ирина Иванова пулчĕç. Ваня Уткин вара ĕçрипе пĕрлех канура та маттур. Кунта вăл артистран та кая мар.



Пĕррехинче çул çӳреве тухса эпир Исетерккĕре Т. Николаева палăкĕ патĕнче, районти краеведени музейĕнче, типографире пултăмăр. Июнĕн 22-мĕшĕнче Шупашкар хулине тухсан ĕмĕр сӳнми çулăм патĕнче, ача-пăча паркĕнче, Атăл хĕрринче, пушарпа кĕрешекен вĕрентӳ центрĕн вутçулăм инкек кӳнине кăтартакан музейра пулни ачасен асĕнче нумайлăха юлĕ.

Çитес çул та эпир хаваспах лагере çӳрĕпĕр.

**Н. НИКОЛАЕВА, А. БЛИНОВА.**

## Куллен ĕçре

Уйăх каялла Çатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта та ĕçпе кану лагерĕ ĕçлеме пуçларĕ. Çак хушăра унта çӳреме кăмăл тунисем ирсерен шкула чупрĕç. С. Н. Никитина лагерь ертӳçи те, Э. Д. Ярикювапа А. В. Ятманова воспитательсем те ĕçпе кану условийĕсене çӳллĕ шайра йĕркелеме тăрăшрĕç.

Лагерьте ĕçлеме кăмăл тунă 40 ача виçĕ отряда пайланса ĕçлерĕмĕр. Ĕç кунĕсенче кашни ушкăнрах ĕçри хастарлăхпа кӳршĕлле савăк шӳт, ташă-юрă хуçаланчĕ. Пĕрремĕш отряд малтан купăста лартма çĕр хатĕрлерĕ, иккĕмĕшсем чечек лартрĕç, кĕçĕннисем сухан йăранĕсене çумран тасатрĕç. Пĕрлехи вăйпа сахал мар эмел курăкĕ те пухрăмăр.

Çак вăхăтра ĕçлекен ачасем умĕнчен тутлă апатçимĕç каймарĕ. Иртнĕ кунсенче Очăкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул çумĕнчи ĕçпе кану лагерьне çӳрекенсемпе тĕл пулу ирттертĕмĕр. Çак ятпа йĕркеленĕ "Хаваслă стартсем" хыççăн икĕ шкулăн арçын ачисемпе хĕр ачисем уйрăммăн футболла вылярĕç. Арçын ачасенчен Çатракассисем, хĕр ачасенчен Очăкассисем маттуртарах пулчĕç. Кайран вара туслăха çирĕплетсе пурăпа асфальт çине ӳкерчĕксем ӳкерессипе хаваслă ăмăрту пулчĕ.

Ĕçпе кану лагерьне çапла кăмăллă йĕркеленĕшĕн учительсене пысăк тав!

**Марина БЕЛОВА. 6-мĕш класс.**

## Сывă ăру – çирĕп пуласлăх



Тахçанах кĕтнĕ çу кунĕсем пуçланчĕç. Урамра вара хаваслă çу кунĕсем хуçаланаççĕ. Вĕренӳ пӳлĕмĕсем ачасемпе пĕр самантлăха сывпуллашма ĕлкĕрчĕç пулин те, Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкула ачасен сасси çав-çавах илем кӳрет. Халĕ вара кунта вĕренекенсен çуллахи тапхăрне усăллă та интереслĕ ирттерес тесе "Колокольчик" лагерь ĕçлет. Çакăнта 20 ача çӳрет, вĕсенчен ытларахăшĕ вара нумай ачаллă çемьерен е учетра тăракансем.

Ачасен ĕçпе канăвне Е.В. Максимова лагерь ертӳçи, О.И. Рылина тата С.С. Максимова воспитательсем, О.А. Максимов шкул директорĕ йĕркелесе пыраççĕ.

Çамрăк ăрăвăн ăс-тăнне, сывлăхне çирĕплетес тесе тĕрлĕ ăмăртусем, вăйăсем, конкурссем иртеççĕ. Техĕмлĕ те витаминсемпе пуян апат-çимĕç сывлăх никĕсĕ пулни те кунта тĕп вырăнта. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем тĕрлĕ эмел курăкĕсем пухаççĕ. Шкул çирĕплетсе панă çĕр лаптăкĕ те ав кулленех тимлĕх ыйтать. Çывăхри вăрман та хăй илемĕпе пуянлăхĕн ытамне йыхравлать. Çавăн пек ĕçлесе пыраççĕ "Колокольчик" лагере çӳрекен ачасем.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: хаваслă-çке туссемпе лагерьте.**